# ШКУЛ САССИ



*15–мĕш кăларăм*
*2023 çулхи çурла уйăхĕ*

**ШКУЛ пурнăçĕ**

****************************************

**Паттăр салтак хĕсметре тăнă вырăнта –Хусанта - хăнара……………………………………………1-4 стр.**

**Шкул хаçачĕ 2022-мĕш çулхи нарăс уйăхĕнчен тухса тăрать**

***Хаçата йĕркелесе яраканĕсем:***
***Ермошкина Раиса Николаевна***
***Сютова Кристина Васильевна***



# ШКУЛ САССИ



*Санарпуç вăтам шкулĕнче ачасене Тăван çĕр-шыва юратма вĕрентеççĕ, унăн историйĕпе паллашса мухтанас туйăма чĕртсе вăйлатас ĕçе пысăк тимлĕх уйăраççĕ.*

*Çурла уйăхĕн 8-мĕшĕнче А.Никонов ячĕпе хисепленсе тăракан çамрăк патриотсен отрячĕ ашшĕ-амăшĕпе, вĕрентекенсемпе, Александр салтак ашшĕ-амăшĕпе Виталий Александровичпа Галина Дмитриевна Никоновсемпе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле Хусан хулине çул тытрĕ.*

*Юлташсемпе шăкăл-шăкăл калаçса пынипе Чăваш Республикин Канаш, Çĕрпӳ, Куславкка, Вăрмар, Комсомольски районĕсем хыçа тăрса юлни сисĕнмерĕ те.*

*Акă çул çӳревçĕсем инçе çула кĕскетсе Тутар Республикине çитрĕç. Хусан хули – капмар та чаплă хула, вăл аякранах мăнаçлăн курăнса ларать.*

*Чи малтанах 35 çынна вырнаçтарма пултарнă пысăк автобус Александр Никонов службăра тăнă çар чаçне илсе çитерчĕ. Сашăн юлташĕсем çамрăк патриотсене ăшшăн кĕтсе илчĕç, казарма тăрăх кăтартса çӳрерĕç. 7-мĕш класс ачисем спецназовецсен снайпер винтовкипе, пулемечĕпе, гранатомечĕпе, разведчиксен хĕллехи-çуллахи тумтирĕсемпе паллашрĕç, алла тытса курчĕç, музейра пулчĕç. Çар хатĕрĕсенчен чылайăшĕ тĕрлĕ вăрçăра, çапăçура пулса курнă иккен. 3,5 килограмран пуçласа 5 е ытларах килограмм таяканскерсем. Бронежилечĕсем те çăмăлах мар çар çыннисен.*





# ШКУЛ САССИ



*Çамрăк патриотсем салтакăн çар службин кун йĕркипе, вĕренӳ расписанийĕпе, ятарлă отряд «чĕлхипе» - мимикăпа жест чĕлхипе- калаçса курчĕç. Спецназовецсем те шкул ачисем пекех парта хушшине ларса урок вĕренни тĕлĕнтерчĕ ачасене. Шăнкăрав сасси кăна илтĕнмерĕ.*

*Акă Александр Никонов сержант пӳлĕмĕ, вăл çывăрнă кровачĕ – ăна никам та йышăнман, вăл Саша чĕрĕ сывă чухнехи пекех. Кровате Раççей ялавĕпе типтерлĕн витсе хунă, юнашар тумба çинче крап беречĕ, стена çинче сăн ӳкерчĕкĕ. Кăмăллă йăл кулă, янкăр кăвак тӳпене аса илтерекен таса куç.*

*Чĕрене тунсăх пусать, пыра тем чăмакки капланать, пит çăмарти тăрăх кĕмĕл шăрçа çул хывать. Çамрăк чĕресем! Ан хуçăлăр! Паттăр ячĕ вилĕмсĕр, вăл яланах тăван халăхăмăр чĕринче упранать, çутă сăнарĕ çăлтăр евĕр ешĕл хунава çул кăтартса парать, сĕмсĕр тăшмана çĕнтерме чĕнет.*

*Чуну Çӳлти Патшалăхра пултăр, харсăр Александр салтак!*

*Çапăçусенче пуç хунă паттăрсене чысласа ятарлă отряд разведчикĕсем асăну палăкĕ умĕнче гирлянда хучĕç. Кăшт тăхтасам, самантăм! Чарăнсам! Ан васка! Тавралăх шăп! Çĕр чăмăрĕ çинче нимĕнле вăрçă-харçă та, нимĕнле куç çуль та çук тейĕн. Кăкăрта чĕре тапни кăна илтĕнет.*

# ШКУЛ САССИ






*А. Никонов ячĕпе хисепленсе тăракан çамрăк патриотсен отрячĕ хăй пултарулăхĕпе паллаштарчĕ, Раççей салтакĕсене тав туса сăвă-юрă парнелерĕ. Отряд ялавĕ ăшă çилпе вĕлкĕшрĕ, пурнăçра тĕрĕс çул суйласа илме хавхалантарчĕ.*

*Юлташсем! Эсир салтак пăтти çисе курнă-и? Пуртăран пĕçернине мар, чăн-чăннине?*

*Пĕлетĕр –и, салтак пăттипе салтак яшки, вĕт кукăль тути халĕ те çăвартах тăрать. Епле тутлă вăл – салтак апачĕ! Техĕмлĕ! Çул çинче самаях ĕшеннĕ хул-çурăма вăй хушать, малалла талпăнма чĕнет.*

*Квадрокоптер темиçе километр çӳллĕшне хăпарса «Барс» ятарлă отряд разведчикĕсемпе çамрăк патриотсем хушшинчи тĕл пулăва ĕмĕр асăнмалăх сăн ӳкерчĕк туса илчĕ.*

*Мăнаçлă бронетранспортер хăнасене алă сулса ăсатрĕ. «Телейлĕ çул пултăр сире, çамрăк туссем!» - тесе калассăн туйăнчĕ.*

*Малалла автобус Хусан хулин анлă урамĕсемпе çул тытрĕ, Кремль умне çитсе чарăнчĕ. Хусан Кремлĕ те ачасене ăшшăн кĕтсе илчĕ. Экскурси ертӳçи калавне çăвара карса пăрахсах итлерĕç, чăваш, вырăс тата тутар халăх историйĕпе, иртнĕ кун-çулĕпе паллашрĕç. Шурă тăраллă капмар хуралтăсем, шурă трамвайсем, шап –шурă тăранттас кӳлнĕ хăла лаша тапăртатса тăни, хĕрлĕ кирпĕчрен хăпартнă Çулăм Пике керменĕ, мăсăльмансен мечечĕ, шур пĕркенчĕк айĕнчи хура хурлăхан куçлă çамрăк тутар пикипе хура костюм тăхăннă тутар йĕкĕчĕ – çамрăк мăшăр - яланлăхах асра тăрса юлĕç. Сăмах май калас пулсан, çул çинче туй курни телее теççĕ.*

# ШКУЛ САССИ

*Мăсăльмансен мечечĕнче те пĕрремĕш хут пулса курчĕç çул çÿревçĕсем. Питĕ кăсăклă ÿкерчĕк. Тавралла эрешлесе тунă стенасем, мечет тăррине хăпармалли пусма картлашкисен шучĕ те çук – сÿл тÿпене илсе хăпартаканскерсем тейĕн, балкон, коран вуласа ларакан араб çынни, тутăр çыхнă тутар маткисемпе ачисем, тупеттейлĕ тутарсем…*

*Сывлăш уçă, таса, тулли кăкăрпа сывласа илес килет ăна – юнашар Атăл шывĕ хумханса выртнăран-ши?*

*Хусан хулин илемлĕ вырăнĕсемпе, йăли-йĕркипе, тĕнĕ-ĕненĕвĕпе паллашса апачĕ-çимĕçĕпе (чакчак, шерпет) сăйланнă хыççăн çул çÿрев автобусĕ килелле васкарĕ. Сывă пул, хурăнташ хуламăр! Тепре тĕл пуличчен!*

*Киле май çулĕ те кĕскелсе пычĕ. Чăваш çĕр-шывĕ, САЛАМ!*

*Куславкка тăрăхĕнчи Хусан тата Сăр хÿтĕлевçисен хутлăхĕнче пулса курни те çамрăксен чĕринче тарăн йĕр  хăварчĕ.*

*Инçе çул çÿрев пурин кăмăлне те кайрĕ. Ăна тивĕçлĕ шайра йĕркелеме пулăшнăшăн шкул администрацийĕ тата 7-мĕш класа куçнă вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕ  ятĕнчен А. Ефимова, Д. Яковлева, тăван çĕр-шыва хÿтĕлесе пуçне хунă А.Никонов çар çыннин ашшĕпе амăшне Галина тата Виталий Никоновсене, «Август» фирма автобус водительне  чун-чĕререн тав тăватпăр, ăнăçу сунатпăр!*

***Чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенĕ – Раиса Ермошкина***